Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

59 (7484) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## К.И. КОСАЧЕВ:“Çăкăр йӳнелĕ, сысна ашĕ хакланĕ, ытти проблемăсем те татăлĕç”





Иртнĕ кĕçнерни кун пирĕн районта Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин çĕршывсем хушшинчи ыйтусемпе ĕçлекен комитет пуçлăхĕ, “Единая Россия” политика партийĕн Генеральнăй Совечĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ К. И.Косачев килсе кайрĕ. Муркашпа Элĕк районĕсен чиккинче Шетмĕпуçĕнче пысăк хăнасене район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Г. Данилов, ентешĕмĕр Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов тата “Единая Россия” политика партийĕн вырăнти организацийĕн ĕçтăвкомĕн ертӳçи А. Ф. Корнеева тата ыттисем кĕтсе илчĕç. Уйкас Янасал тăрăхне кайнă май Юрий Александрович хăнасене районăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Çавăн пекех халăха хумхантаракан ыйтусене те манса хăвармарĕ. Вĕсем вара пирĕн çук мар. Халĕ, акă, ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн ялсем патне çити асфальт çулсем тăватпăр. Ку ĕçе кăçал 19 ял патне çити туса ирттермелле. Çав хушăрах вара район территорине кĕрекен республика çулĕсене юсассине ниепле те татса пама май çук. Унсăр пуçне ялсенчи çĕнĕ урамсене электричество кĕртесси те йывăр ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Е тата халăха таса шывпа тивĕçтерес программăна илер. Вăл пурнăçа кĕме пуçлани 3-мĕш çул пулин те пирĕн районта пурăнакансем ăна сисмеççĕ-ха. Мĕншĕн тесен асăннă программа хальлĕхе кăнтăр районсенче çеç пурнăçа кĕрет. Нумай çул каялла хута янă шывпа тивĕçтерекен системăна вара вăхăта сая ямасăр йĕркене кĕртмелле.

Юрий Александрович çавăн пекех ял халăхне юлашки вăхăтра сысна ашне вырнаçтарма йывăрланса пынине палăртрĕ. Çав хушăра магазинсенче сутакан аш хакĕ те, ашран хатĕрленĕ продукцин те хакĕ пĕр пус та чакмасть-çке.

–Пĕлетĕп ку проблемăна, – калаçăва малалла тăсрĕ Константин Иосифович. Юрий Александрович хускатнă ыйтусене хăй патне çырса палăртнă май. “АПК аталантарасси” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредит илсе сысна çитĕнтерекен ял çыннисене ку ыйтăва татса пама пулăшмаллине палăртрĕ вăл.

Районпа паллашассине вара Константин Иосифович Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнчен пуçларĕ. Кунти шкулпа клуб пĕрле епле ĕçленипе кăсăкланчĕ. Клубра, спортзалта, ачасен вăхăтлăх пулакан группăра, библиотекăра пулчĕ, район энциклопедийĕпе хамăр тăрăхри халăхăн йăли-йĕркине çутатакан кĕнекепе паллашрĕ. Н. В. Никольский музейĕнче пулнă хыççăн вара хăй тĕлĕннине те , савăннине те пытармарĕ:

–Чун савăнать Никольскишĕн те, унăн ятне-сумне çӳле çĕклекенсемшĕн, унăн ĕçне малалла тăсакансемшĕн те. Ку чăннипех те чăваш халăхĕн ылтăн çӳпçи. Тавах Турра, эпир хамăр наци мулне ăнланса, çĕнĕрен чĕрĕлме пуçларăмăр.

Ильич ячĕллĕ хуçалăхăн администрацийĕнче вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе тĕл пулу иртрĕ. Асăннă хуçалăх ертӳçи И. В. Николаев пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарнă май проблемăсене хускатас шухăшлă пек марччĕ.

– Хускатмалла,- терĕç харăсах Юрий Александровичпа Константин Иосифович.

–Проблемăсем пирки каламалла. Эпĕ агитацилеме килмен, сире итлеме килнĕ, – сăмах илчĕ Патшалăх Думин комитечĕн ертӳçи.

Вĕсем вара, татса паман ыйтусем, сахалах мар çав районта пурăнакансен. Пĕрин хыççăн тепри ыйту пачĕç ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем.

–Мĕншĕн хаксен шайлашăвĕ курăнмасть? Çунтармалли-сĕрмелли материалсен хакĕ хăпарсах пырать, çав хушăра сысна ашне халăхăн унăн хăйхаклăхĕнчен те чылай пĕчĕкрех хакпа сутма тивет. Ял çыннин ĕçне шута хуманни пирки каламасть-и вара вăл çитĕнтернĕ продукци пĕтĕмпех йӳнĕ пулни.

**Сăн ӳкерчĕксенче: Н.В. Никольский музейĕнче, «Сеспель» предприятире.** **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

### Симĕс ĕç çи

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче июлĕн 21-мĕшĕ тĕлне выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем епле пынине кăтартни**

***Колонкăсенче: 1.Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕ (гектарпа). 2.Нумай çул ӳсекен курăксене çулнă. 3. Утă хатĕрленĕ. 4. Сенаж хывнă. 5. Силос хывнă (процентпа).***

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 410 | 98 | 72 | 63 | – |
| “Волга” | 583 | 72 | 70 | 44 | – |
| “Восток” | 225 | 93 | 100 | – | 38 |
| “Герой” | 275 | 95 | 52 | – | 68 |
| К. Иванов яч. хис. | 325 | 9 | 6 | 74 | – |
| Ильич яч. хис. | 480 | 100 | 28 | 100 | – |
| Ленин яч. хис. | 550 | 73 | 77 | – | – |
| “Лидер” | 462 | 65 | 15 | – | – |
| “Оринино” | 621 | 95 | 60 | – | 117 |
| “Передовик” | 874 | 33 | 24 | – | – |
| “Свобода” | 440 | 80 | 41 | 90 | – |
| “Сеятель” | 646 | 98 | 107 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 664 | 42 | 38 | 70 | – |
| “Рассвет” | 515 | 58 | 51 | – | 44 |
| “Ударник” | 1274 | 78 | 73 | – | 91 |
| Чапаев яч. хис. | 335 | 70 | 27 | 64 | – |
| “Чемеево” | 297 | 63 | 40 | – | 43 |
| Чкалов яч. хис. | 232 | 100 | 74 | – | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **11059** | **60** | **49** | **39** | **47** |

### Вунă кунлăх

## Юсавсăр техника çула ан тухтăр

Пирĕн районта паянхи куна учетра 5883 автомототранспорт тăрать. Кăçалхи ултă уйăхра вара мĕн пур техникăн 25,7 процентĕ кăна техника тĕрĕслевĕ витĕр тухнă. Çав шутра предприятисен 29,3 процент, уйрăм çынсен 30,5 процент. Мототранспорт техника тĕрĕслевĕ витĕр тухни тата сахалрах, 3,1 процент кăна.

Çакăн пек лару-тăрупа эпир килĕшсе тăма пултараймастпăр. Ял хуçалăх предприятийĕсенче техника кивелнине эпир пĕлетпĕр. Усă курмасăр лараканни те сахал мар.

Уйрăм çынсем те юрăхсăра тухнă техника чылай тытаççĕ. Шутласа пăхăр, мĕн пур мотоциклсен 3,1 процентĕ кăна техника тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕ.

Налук органĕсемпе малашне пĕрле ĕçлеме тăрăшăпăр. Усă курман техникăшăн налука никамăн та тӳлес килмĕ.

Юсавсăр техника çула тухни нумай чухне инкек патне илсе пырать, çынсен сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Çавăнпа патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ июлĕн 20 – 31-мĕшĕсенче ятарлă “Техосмотр-Утиль” вунăкунлăх ирттерет. Çак тапхăрта регистрацилемен юрăхсăр техникăна тупса палăртассипе тимлĕрех ĕçлĕпĕр. Ял çыннисене те юсавсăр техникăран хăтăлма чĕнсе калатпăр.

**С. ИВАНОВ,**
**çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕ.**

### Вулакансене пĕлме

## Лотерея вылявĕ – август уйăхĕнче

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттерессине вулакансем астăваççĕ ĕнтĕ.**

**Лотерея вылявне редакци август уйăхĕнче ирттерме палăртать. Ку тĕллевпе ятарлă комисси йĕркелетпĕр. Халĕ почта, “Чăваш пичечĕн” ĕçченĕсемпе “Çĕнтерӳ ялавне” 6 уйăха çырăннисен списокне хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Паллах выляв ирттерме парнесем те туянатпăр.**

**Район хаçатне çырăнса илекенсене пурне те тав сăмахĕ калатпăр.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

### Пĕрлехи информаци кунĕнчен

## Канăç паман ыйтусем çук мар

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района ЧР Патшалăх ветеринари службин госветнадзорпа ветеринари мероприятийĕсене йĕркелекен, мониторинг пайĕн пуçлăхĕ Г. М. Лукин, асăннă службăн бухгалтерипе учет пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А. В. Портнов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕ – Патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Р. А. Кондратьева, “РФ Юстици министерствин Чăваш республикинчи лабораторийĕ” патшалăх учрежденин ертӳçи Л. П. Морозов килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю. А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене район пурнăçĕпе паллаштарчĕç. Унтан информаци ушкăнĕсем район администрацийĕн ларусен залĕнче иртнĕ районăн кăçалхи çур çулти аталанăвне пĕтĕмлетес тĕллевпе йĕркеленĕ анлă канашлăвĕн ĕçне хутшăнчĕç.

Кăнтăрла иртсен вара информаци ушкăнĕсем вырăнсене тухса ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Геннадий Матвеевич ертсе пыракан ушкăн Чуманкасси ял тăрăхне çитрĕ. Чи малтанах вĕсем Чапаев ячĕллĕ хуçалăх уйĕсенче пулса унти лару-тăрупа паллашрĕç.

– Кăçал 2200 тонна сенаж, 400 тонна утă хатĕрлеме палăртнă, хальлĕхе вара утă 150, сенаж 1300 тонна янтăланă, – паллаштарать Чапаев яч. хис. хуçалăх ертӳçи В. П. Морозов. Вăл каланă тăрăх, тырă пĕр пек шăтса ӳсмен лаптăксем кунта 150 гектар. Унтан тырă сенажĕ туса, çĕрне кĕрхи культурăсем акма хатĕрлес шухăшлă.

Уйра симĕс ĕçси те, çĕр хатĕрлесси те малалла пырать.

Ун хыççăн Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем Отарккăран Чуманкассине çитекен çула тунă çĕрте пулса курчĕç. “Волгодорстрой” ĕçченĕсен ĕçĕпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л. Г. Ковалева та кăмăллă.

Чкалов ячĕллĕ хуçалăхăн сĕт-çу ферминче пулнă май информаци ушкăнĕ кунта çĕнĕ меслетпе тума палăртнă ĕне сарайĕнче пулса курчĕ. Паян кунта талăкра кашни ĕнерен 12 килограмм сĕт сăваççĕ. Ытти хуçалăхсенчи пек кунта концентрат проблеми çук. Вăл хăйсем каланă пек каласан, кунта паян та “мăй таран”. Çакă та савăнтарать. Асăннă хуçалăхра ĕнесен йышне ӳстернĕ. Март уйăхĕччен вĕсен йышĕ 64 пулнă пулсан, апрельтен вара – 90. Каçхи сăвăм хыççĕн ĕнесене çĕнĕрен уя кăлараççĕ.

Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче пулнине халĕ выльăх апачĕ хатĕрленĕ чух та асра тытаççĕ. Хуçалăхăн тĕп агрономĕ каланă тăрăх, иртнĕ çул кунта тырă сенажне 600 тонна хатĕрленĕ пулсан , кăçал ăна 700 тоннăран та ирттересшĕн. Сенаж хатĕрлеме пуçлатпăр. Хальлĕхе утă 600 тонна хатĕрленĕ, – терĕ А. П. Лукин. Утта уйран рулонпа кĕртеççĕ.

Тĕл пулусенче вара çакă палăрчĕ. Районти ытти çĕрти пекех Чуманкасси тăрăхĕнче пурăнакансене сысна ашĕ йӳнелни пăшăрхантарать. Исетерккĕпе Анаткас Апаш ялĕсенче пурăнакансен тата шыв проблемипе пуç ыратать. Ĕçленипе пĕрлех кӳршĕ-аршăсем мĕнле пурăннине те пĕлесшĕн. Республика кунĕ тĕлне вырăнсенче радио ĕçлеме пуçламалла, тенине кунта асрах тытаççĕ, кĕтеççĕ, шанаççĕ çак ыйтăва татса парасса.

Тепĕр икĕ информаци ушкăнĕ çав кун Муркаш тата Çатракасси ял тăрăхĕсенче, вĕсен территорийĕнче вырнаçнă предприятисемпе организацисенче пулчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă аппана, çывăх тăванăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Юлия Алексеевна СТЕПАНОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр.

Сана юбилей ячĕпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Ĕмĕрӳ - чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Мăшăру, ачусемпе мăнуку, çывăх тăвансем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Пысăк салампа Турайри шăллĕн çемйи тата çывăх тăванĕсем.**



Çут тĕнчери чи хаклă çыннăмăра, мăшăра, аннене, асаннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Шупуç ялĕнче пурăнакан **Алевтина Никифоровна ЛАПТЕВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн шăранса тухакан чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, çемьере юратупа килĕшӳ, килçуртра татулăхпа çураçулăх, ырлăхлă та тивлетлĕ пулма, ĕмĕт-тĕллевсем патне çитсе пыма, тăванлăх туйăмĕсене тасан упрама хавхалануллă кăмăл-туйăм сунатпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 2 ывăлĕпе 2 кинĕ, мăнукĕ, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**